Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

91 (8052) № ✻ Шăмат кун, 2012 ҫулхи чӳк (ноябрь) уйăхĕн 24-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ачасем пурри – амăшĕшĕн тĕрек

*«Ҫемьере килĕшӳ, ăнлану пуласси амăшĕнчен нумай килет», – ҫапла шутлаҫҫĕ Оринин ял тăрăхĕнче пурăнакан С. Михайловăпа О. Шидикова (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла).*

*Оринин ял тăрăхĕн администрацийĕнче эксперт специалистĕнче тăрăшать Светлана Алексеевна. Мăшăрĕпе Леонид Николаевичпа пĕрле виҫĕ ача ӳстереҫҫĕ. Асли ҫемье ҫавăрнă ĕнтĕ. Ҫапла вара Светлана Алексеевна мăнукĕпе те аппаланма вăхăт тупать. Ҫакна питĕ пысăк савăнăҫ тесех шутлать.*

*Оксана Алексеевна Орининти ветучасткора тимлет, хальхи вăхăтра кунта заведующи тивĕҫĕсене пурнăҫлать. Икĕ ывăл пăхса ӳстерет вăл. Асли шкул пĕтерсе малалла вĕренме кайнă, кĕҫĕннин вара Çĕмĕрле районĕнчи ятарлă шкулта вĕренмелле пулса тухнă: пĕчĕккĕ чухне ача йывăр суранланнă. Шел пулин те, Оксана Алексеевнăн мăшăрĕ вăхăтсăр ҫĕре кĕнĕ. Анчах та ҫак йывăрлăх уйăран ӳкермен хĕрарăма. Унăн тăрăшулăхне кура патшалăх енчен пулăшу та пулнă. Халĕ акă Шидиковсен ҫемйи унпа усă курса пурăнмалли условисене лайăхлатать.*

*«Темĕнле йывăрлăх та пулма пултарать пурнăҫра. Ачасем пурри амăшне яланах тĕкĕ парать. Хамăрăн аннесем, хунямасем калани асрах. «Ҫемьере хăш-пĕр лару-тăруpa пĕр-пĕрне вырăн пама та пĕлмелле», – тетчĕҫ вĕсем. Ҫакна шута хума тăрăшса пурăнатпăр», – пурнăҫри вăрттăнлăхсенчен пĕрине уҫса пачĕҫ хĕрарăмсем.*

**Н. НИКОЛАЕВА** сăн ӳкерчĕкĕ.

Ыран – Раҫҫейри амăшĕн кунĕ



## Ҫамрăк учительсене – патшалăх пулăшăвĕ

Республика Пуҫлăхĕ кăҫалхи июнĕн 21-мĕшĕнче «Чăваш Республикинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕрентӳ учрежденийĕсенче вăй хуракан ҫамрăк учительсен пурăнмалли условийĕсене лайăхлатассин мерисем ҫинчен» Указа алă пуснăччĕ. Иртнĕ кунсенче вара ҫак Указпа килĕшӳллĕн патшалăх пулăшăвне тивĕҫме пултаракан учительсемпе Чăваш Республикин вĕрентӳ институтĕнче ятарлă семинар иртнĕ. Семинара кредит паракан организацисемпе пĕрле Вĕрентӳ министерствин представителĕсем те хутшăннă.

Указпа килĕшӳллĕн пурăнмалли ҫурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма патшалăх ҫамрăк учительсене ипотека кредичĕн пĕрремĕш тӳлев пайне субсидилет тата кредит процентне ҫулталăка палăртса хунин 4 процентĕ чухлĕ тӳлевĕн пĕр пайне саплаштарать.

Асăннă Указпа никĕслесе Министрсен Кабинечĕ кăҫалхи октябрĕн 29-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе пулăшу майĕсене ҫирĕплетнĕ. Ҫапла вара ҫамрăк учительсем ипотека кредичĕн пĕрремĕш тӳлев пайне илнине патшалăх акă мĕнле саплаштарать: пĕр ҫынран тăракан ҫемьене (кредит 937,2 пин тенкĕпе танлашать пулсан) – 187,44 пин тенкине; икĕ ҫынран тăракан ҫемьене (кредит 1192,8 пин тенкĕ пулсан) – 238,56 пин тенкине; виҫĕ ҫынран тăракан ҫемьене (кредит 1533,6 пин тенкĕ пулсан) – 306,72 пин тенкине; икĕ ҫынран тăракан ҫемьене (кредит 2044,8 пин тенкĕ пулсан) – 408,96 пин тенкине; икĕ ҫынран тăракан ҫемьене (кредит 2556 пин тенкĕ пулсан) – 511,2 пин тенкине.

Ҫак программăпа ĕҫлеме килĕшнине ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне сакăр кредит организацийĕ пĕлтернĕ. Вĕсен шутĕнче «Россельхозбанкăн» Чăваш регион филиалĕ, Раҫҫей перекет банкĕн Чăваш Енри уйрăмĕ, «АК БАРСăн» Шупашкарти филиалĕ тата ыттисем те.

**ЧР Вĕрентӳ тата ҫамрăксен политикин министерствин сайтĕнчен.**

Черетлĕ информаци кунĕ

## Ҫынран хăйĕнченех килет ҫав

***Районта ноябрĕн 21-мĕшĕнче черетлĕ информаци кунĕ иртесси пирки пĕлтернĕччĕ. Унăн теми – Чăваш Республикин экономикин социаллă пурнăҫ аталанăвĕн кăҫалхи 9 уйăх итогĕсем ҫинчен, республикăн 2012 ҫулхи бюджет политики ҫинчен, Чăваш Республикин Пуҫлăхĕ 2012 ҫулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнче йышăннă 124 № «Чăваш Республикинче ялсенче пурăнакансене медицинăпа санитари пулăшăвĕ парассине ҫĕнетсе лайăхлатассин хушма мерисем ҫинчен» Указĕ, Чăваш Республикинче пирус туртнине чакарас тĕллевпе туса иртермелли ĕҫсем ҫинчен. Района килнĕ ушкăнсен представителĕсем район администрацийĕн ответлă ĕҫченĕсемпе тата федераллă структурăсен районти представителĕсемпе пĕрле ял тăрăхĕсенче пулчĕҫ, ĕҫ коллективĕсемпе тĕл пулчĕҫ, ҫынсене интереслентерекен ыйтусем ҫине хуравларĕҫ.***

*Пĕрлехи информаци кунĕнче район администрацийĕн пуҫлăхĕ Р. Тимофеев Атăлла Вятка банкĕн председателĕн ҫумĕпе – Раҫҫей Федерацийĕн Акционерсен коммерци Перекет банкĕн Чăваш Республикинчи 8613-мĕш номерлĕ уйрăмĕн управляющийĕпе В. Александровăпа тата Раҫҫей Перекет банкĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн Муркашри хушма офисĕн заведующийĕпе Ю. Ивановăпа пĕрле хушма офисра пулчĕ.*

Чи малтан вĕсем «Ударник» хуҫалăхри лару-тăру тавра калаҫрĕҫ. «Пирĕншĕн чи кирли – хуҫалăха сыхласа хăварасси, ҫав тĕллевпе хамăр енчен мĕн кирлине тăвасси», – палăртрĕ Вячеслав Николаевич.

Унтан вĕсем хушма офисăн ĕҫ коллективĕпе тĕл пулчĕҫ. Пĕрлехи информаци кунне кĕртнĕ ыйтусем ҫинче тĕплĕн чарăнса тăнă май чăваш банкирĕсен ертӳҫи ҫакна палăртрĕ. Чăваш Республикин ҫитес ҫулхи тата сывхарса килекен ун хыҫҫăнхи икĕ ҫулти бюджета чылай нумай ҫĕнĕ программăсене финанслассине хăварнă. Вĕсем йăлтах халăхăн пурнăҫне лайăхлатма пулăшассĕ.

Чăваш Республикин Пуҫлăхĕн М. Игнатьевăн республикăра 100 ФАП тумалли ҫинчен калакан Указĕ ҫинче чарăннă май ҫакна палăртрĕ: Унта Муркаш районĕ те хутшăнать. Район администрацийĕн пуҫлăхĕ Р. Тимофеев палăртнă тăрăх Чуманкассипе Шомикра ҫĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕсене тума палăртнă. Мăн Токшикра, Тойкилтĕре тата Шуркассинче вара ҫак медицина учрежденийĕсене тĕпрен юсаса ҫĕнетмелле.

(Вĕҫĕ 2-мĕш стр.)

Республикăра

## Кăҫал 11 ача сачĕ хута кайĕ

***Ноябрĕн 21-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуҫлăхĕ Михаил Игнатьев шкул ҫулне ҫитмен ача-пăча учрежденийĕсен сетьне аталантарассипе йĕркеленĕ видеоконференцие хутшăннă. Ăна Раҫҫей Правительствин Председателĕ Дмитрий Медведев ирттернĕ.***

Премьер-министр палăртнă тăрăх хальхи вăхăтра уйрăмах яллă вырăнсенче ачасене шкул ҫулне ҫитменнисен учрежденийĕсемпе тивĕҫтерессин проблеми ҫивĕч-ха. 2012 ҫулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ку учрежденисене 5 млн ытла ача ҫӳренĕ, черетре татах 400 пин ытла ача. «Пирĕн тĕллев ҫапла: 2016 ҫул тĕлне черетсем пулмалла мар», – палăртнă Д. Медведев.

Ҫĕр-шыв правительстви ҫĕнĕ садиксем тума, киввисене реконструкцилеме регионсене бюджет кредичĕсем уйăрса парса та пулăшать. 2012 ҫулта кăна 41 регион 8 миллиарда яхăн укҫа-тенкĕне тивĕҫнĕ.

Хальхи вăхăтра пирĕн республикăра шкул ҫулне ҫитмен ача-пăча учрежденийĕсем 439. Кунсăр пуҫне пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 192 шкулта шкул ҫулне ҫитменнисен уйрăмĕсене йĕркеленĕ.

2012 – 2015 ҫулсенче 8633 вырăнлăх хальхи 54 ача сачĕ хута каймалла. Кăҫал 1573 вырăнлăх ҫĕнĕ 6 ача сачĕ хута янă. Ҫулталăк вĕҫлениччен 635 вырăнлăх татах 5 ача сачĕ ĕҫе кĕртмелле. Вăл шутра Муркашра та.

Уяв умĕн

## Амăшĕсене чысларĕҫ

Раҫҫейри амăшĕн кунне халалланă мероприятисем районта анлă иртрĕҫ. Ноябрĕн 23-мĕшĕнче Чăваш наци телевиденийĕн ĕҫченĕсем сакăр паттăр-ывăл ҫуратса ӳстернĕ, 1 степень Аслă Петĕр орденне тивĕҫнĕ, Чăваш Республикин Ĕҫ мухтавĕн тата паттăрлăхĕн хисеп кĕнекине кĕртнĕ тата ытти чылай хисепе тивĕҫнĕ Татьяна Николаева патăкĕ умĕнче пулчĕҫ. Вĕсем кунта чăн-чăн чăваш хĕрарăмĕн ĕҫĕ-хĕлĕпе паллашма пултарчĕҫ, пуҫ тайса чĕрĕ чечексем хучĕҫ.

Ҫавăн пекех районти тури чăвашсен музейĕнче сумлă хĕрарăма чысласа ятарлă кĕтес усăнă. Паттăрлăх кăтартнă ҫемье кун-ҫулĕ ҫинчен тĕплĕнрех пĕлме пулать. Кунтах Татьяна Николаевна ҫĕленĕ кĕпе, вăл тырă вырнă ҫурла, ывăлĕсен ҫырăвĕсем тата ытти те.

Мероприятие тăснă май кунта пухăннисем тури чăвашсен музейĕнчи тĕрлĕ тематикăллă экспонатсемпе паллашрĕҫ. Ача амăшĕсене район администрацийĕн пуҫлăхĕ Р. Тимофеев, социаллă хӳтĕлĕх пайĕн ертӳҫин тивĕҫĕсене пурнăҫлакан Н. Васильева тата ыттисем саламларĕҫ. Кунта килнĕ амăшĕсем Раҫҫей тата Чăваш Республики шайĕнчи ача амăш капиталĕн сертификачĕсене тивĕҫрĕҫ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Ĕҫпе тивĕҫтерекен центрта

## Ҫул ҫитменнисене – вăхăтлăх ĕҫ

**Ҫул ҫитмен яш-кĕрĕме вăхăтлăх ĕҫ вырăнĕсемпе тивĕҫтересси патшалăх политикин тĕп енĕсенчен пĕри пулса тăрать. Ҫавна валли ĕҫпе тивĕҫтерекен центр ҫуллен сахал мар укҫа-тенкĕ уйăрать.**

Ҫул ҫитменнисем уйăхсерен вăтамран 850 – 1275 тенкĕ ĕҫлесе илме пултараҫҫĕ. 2012 ҫулта 670 яшпа хĕре вăхăтлăх ĕҫе явăҫтарма 572,85 пин тенкĕ уйăрса панă. Пĕтĕмпе вара кăҫал ҫулталăк пуҫланнăранпа ҫул ҫитмен граждансене вăхăтлăх ĕҫе вырнаҫтарма предприятисемпе тата организацисемпе 32 килĕшӳ тунă.

Ачасенчен ытларахăшĕ ял хуҫалăх ĕҫĕсене хутшăннă, юсав ĕҫĕсем пурнăҫланă, палăксем таврашĕнчи территорисене, урамсене тирпей-илем кĕртнĕ, ял хуҫалăх продукцийĕ пуҫтарса илме ҫĕрте ĕҫленĕ. Вĕсем палăртнă тăрăх тирпей-илем кĕртес ĕҫсене хутшăнни хăйсене обществăлла усăллă ĕҫпе ҫывăхлатать кăна мар, тасалăхпа тирпейлĕх тытса тăрассинчи граждансен ответлăх туйăмне те ӳстерет. Вĕренекен ачасенчен ытларахăшне хăйсен тăван шкулĕсене янă.

Ĕҫ – пурнăҫ тыткăчи тесе ахальтен каламан. Ҫамрăксене шкул ҫулĕсенченех ĕҫе явăҫтарни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕренӳрен пушă вăхăтра вара вĕсем хăйсен валли укҫа-тенкĕ ĕҫлесе илме те пултарнине ырламалла кăна.

**Хамăр инф.**

Ҫырăнтару – 2013

**Хаклă вулаканăм! Районти «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата 2013 ҫулхи пĕрремĕш ҫур ҫулта илсе тăма малалла ҫырăнтараҫҫĕ. Аса илтеретпĕр, районти ҫатăн шăмат кунхи кăларăмĕ июльтен 8 страницăпа тухма пуҫларĕ.**

**«Ҫĕнтерӳ ялавне» 6 уйăха ҫырăнмалли хак – 204 тенкĕ.**

**Райхаҫат редакцийĕ.**

# Çынран хăйĕнченех килет çав

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Вячеслав Николаевич Перекет банкĕн республикăри уйрăмĕн Муркашри хушма офисĕн ĕçченĕсем хăйсен тивĕçне пĕлсе тата пахалăхлă пурнăçланине палăртрĕ. Кăтартусем лайăх пулнăшăн тав турĕ. Перекет банкĕн пулăшăвĕсем çинче чарăнса тăнă май, вĕсенчен çĕннисемпе халăха ытларах тивĕçтермеллине пĕлтерчĕ. Тĕслĕхрен, Перекет сертификачĕсене парассипе, Он-лайн вкладсем парассипе тата ыттипе те. Килти хушма хуçалăхсене паракан кредитсем халăхăн пурнăç шайне ÿстерме пулăшнине палăртрĕ.

Халăхăн пурнăç шайĕ ÿссе пынине районти предприятисен аталанăвĕ те çирĕплетсе парать. Кăçалхи 10 уйăхра вĕсем малтанхинчен чылай лайăх ĕçлени палăрчĕ. Апла пулсан ĕç укçи те хăпарса пырать, пурнăç шайĕ те. Район бюджечĕн хамăр çак хушăра тунă тупăш пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 35 процент ытларах пулнине кăтартса парать.

Ростислав Николаевич районта сахал хутлă çуртсем тума çĕр хатĕрлес ĕç пынине каларĕ. Район аталанăвĕпе тĕплĕн паллаштарчĕ.

Информаци ушкăнĕ Перекет банкĕн Муркашри хушма офисĕн Мăн Сĕнтĕрти филиалĕнче те пулса курчĕ. В. Александров хăш-хăш предприятисем Перекет банкĕ урлă ĕç укçи илнипе интересленчĕ. Камăн Перекет банкĕн ĕç укçи илмелли карточки пур, çавсене пурне те кредит карттисемпе тивĕçтермеллине палăртрĕ. Çавăн пекех карточка пуррисем бонус программинче регистрациленсен, клиентсен бонус пухăнса пынине, çакă клиент майлă тунă ырă утăм пулнине палăртрĕ.

Информаци ушкăнĕ «Карина» предприятире пулса курчĕ. Кунта 30 çын ĕçлет. Ĕçе 2 сменăпа йĕркеленĕ. Пурте тенĕ пекех ыранти çынсем. Кунта туса кăларакан пластик чÿречесемпе алăксене Мускав çывăхĕнчи предприятисем те хаваспах туянаççĕ. Кунта хальлĕхе 2 цех ĕçлет. Кĕçех вĕсен шучĕ виççе çитет.

Юнашарти «МирТрубПласт» предприятире те мал ĕмĕтпе пурăнаççĕ, ĕçлеççĕ. Кăçал кăна кунта 3 млн. долларлăх оборудовани вырнаçтарнă. Предприятин Хусанта филиал пур. Ижевскра, Барнаулта, Красноярск крайĕнче тата ытти çĕрте суту-илÿ представительствине туса хунă. Мăн Сĕнтĕрти предприятин тĕрлĕ диаметрлă пăрăхĕсене хаваспах туянаççĕ Раççейре.

Мăн Сĕнтĕрти райпо коллективĕпе те тĕл пулчĕ çак кун информаци ушкăнĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев район аталанăвĕпе паллаштарнипе пĕрлех тирпейлĕх ыйтăвне хускатрĕ. Пурнăçра йăлтах çынсенчен килнине палăртрĕ. Ку, чăнах та, тĕрĕс сăмахсем пулнине райпо канашĕн ертÿçи Л. Майкова та çирĕплетрĕ. Кунти сутуçăсем 20, 30 пин тенкĕ илекенсем те пур.

Тумалли вара ку территоринче те пур. Ростислав Николаевич çитес çул кунта çĕнĕ ача садне проектламаллине, нумай хваттерлĕ çĕнĕ çурт тумаллине палăртрĕ. Хальхи вăхăтра вара Культурăпа кану çурчĕн пристройне тăваççĕ.

Тĕл пулура ял çыннисем хăйсене хумхантаракан ыйтусене те хускатрĕç. Мăн Сĕнтĕрте пурăнакансене час-часах шыв пулманни пăшăрхантарать. Тренккăри нумай хваттерлĕ çуртра пурăнакансен те пур ку нуша. Мăн Сĕнтĕр ялĕнче, кунти автобус чарăнмалли вырăнта тата Москакассинчи остановкăра электричество çути пулманни те канăç памасть çынсене. М-7 трасса çинче реконструкци тунă май автомашинăсем Мăн Сĕнтĕр витĕр кайса çула пăснă вырăнсене кам тата хăçан юсать? Ĕçекен çынсене малтанхи пек вăйпах сиплеме ямалла тума çукши? Çак тата ытти ыйтусем те пулчĕç. Информаци ушкăнне кĕрекенсем вĕсем çине тулли хуравсем пачĕç.

Тÿрех татса пама май çук ыйтусене пурнăçламалли çул-йĕре информаци кунне пĕтĕмлетнĕ май палăртса хăварчĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Тĕл пулусенчи уçă калаçусем

***Раççей Федерацийĕн Юстици министерствин Чăваш Енри суд экспертизин федераллă бюджет учрежденийĕн пуçлăхĕ Леонид Морозов тата район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ Елена Чернова çав кун Çатракасси тата Шетмĕпуç ял тăрăхĕсене çитрĕç, вĕсенчи ĕç коллективĕсенчи лару-тăрупа паллашрĕç, çынсемпе тĕл пулчĕç.***

Шел пулин те, Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыракан Геннадий Трофимова та, «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн ертÿçине Виталий Никитина та çав кун информаци ушкăнĕ вырăнта тĕл пулаймарĕ. Татса памалли ыйтăвĕсем вара çук мар.

Акă Çатракасси шкулĕн территорийĕнчех, çитменнине ял тăрăхĕн администрацийĕн çуртĕнчех вырнаçнă ял библиотекинче паянхи куна çитсе те Интернет çук. Информаци анлăшне тухма май çук пулсан пÿлĕмре компьютер хитреленсе ларни хальхи вăхăтра кама кирлĕ? Çитменнине кунта кунсерен шкул ачисем йышлă çÿреççĕ.

«Кашмашри информаципе культура центрĕ» муниципаллă бюджет культура учрежденине» пырса кĕрсенех кунта чăннипех чунне парса тăрăшакан, ырă кăмăллă çын аллине туйса илмесĕр май çук. Пур çĕрте те таса, тирпейлĕ, ăшă, çутă. Чăн-чăн Культура керменĕ. Камăн чунĕ туртмĕ-ха кун пек çĕре?

Роза Николаева директор каласа панă тăрăх центр алăкĕ яланах уçă, кунта никама та кичем мар, каççерен яш-кĕрĕм пухăнать, тăтăшах тĕрлĕ мероприятисем, вăл шутра спорт мероприятийĕсем те йĕркелеççĕ, дискотекăсем ирттереççĕ. Çывăх вăхăтрах яш-кĕрĕм валли бильярд, сĕтел çи теннисĕ туянма май çитересшĕн. Çамрăк çынна ташă хусканăвĕ кăна мар, спорт енĕсен хусканăвĕ те кирлех вĕт-ха.

Халĕ дискотекăсене каçхи 10 сехет çитсен чарма тивет. Çирĕплетнĕ йĕркене пăсма юрамасть. Çамрăксен вара урамра сулланса çÿриччен ташлас килет. Çавăнпа та Роза Петровна çывăх вăхăтрах видеорегистраци аппаратурине вырнаçтарттарасшăн. Хатĕрленÿ ĕçĕсене вĕçленĕ темелле. Ун чухне дискотекăсене те тепĕр сехет тăсма май пулĕ.

Ĕçлес текен çын пĕр вырăнта тăмасть, унăн шухăш-кăмăлĕ малаллах пăхать. Калăпăр, çулланнă çынсемпе, ватăраххисемпе тĕл пулусем, пĕрле пухăнса калаçусем йĕркелени вăл пĕр ыйту. Анчах та директор шухăшĕпе паянхи çамрăка кунпа кăна уçă калаçăва астараймăн. Кашни тĕл пулăва полици ĕçченне е психолога кăна чĕннипе май çук. Анлăрах пăхас пулать ку ыйту çине. Паянхи хĕрсенех илер: вĕсене хитре прическа та, илемлĕ сăрланасси те, хĕр-хĕрарăм гигиени те кирлĕ. Кун пек специалистсем çук мар ĕнтĕ. Анчах та хăшĕ-ха вĕсенчен хальхи вăхăтра укçа тÿлемесĕр кун пек мероприятисене тухса çÿреме килĕшĕ, çитменнине ĕçрен пушă вăхăтра?

Çавăнпа та Роза Петровна район шайĕнче çул çитмен çамрăксен клубне е шкулне йĕркелеме сĕнет. Вĕсем ку енĕпе вырăнсенчи Культура çурчĕсемпе центрĕсене конкретлă пулăшу пама пултарччăр.

Шетмĕпуç ял тăрăхĕн ĕçĕхĕлĕпе унăн пуçлăхĕ Николай Александров паллаштарчĕ. Ытти çĕрти пекех кунта та усă курман çĕр лаптăкĕсен, çĕр пайĕсен, арендăри çĕрсен ыйтăвĕ кун йĕркинчен тухмасть. Ялсенче пухăнакан йăла каяшне тиесе турттарасси (сăмах уншăн тÿлесси пирки пырать), шыв уçлакан башньăсемпе шыв пăрăхĕсене тытса тăрасси те – проблемăллă ыйтусем.

Кăçал Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкулта капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерме май çитернине вара ырламалла кăна. Шкул çурчĕн çивиттине çĕнĕрен тунă кăна мар, ишĕлме тытăннă стенасене те тĕпрен юсаса тухнă, шалта та юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ, пурне те мар пулин те, чÿречесене те пластикпа ылмаштарнă.

Шкул директорĕ Антонина Степанова çавна та палăртрĕ. Федераллă бюджетран уйăрса панă 4 миллион тенкĕ çине кăна шанса ларнă пулсан пĕтĕм ĕçсен çуррине те пурнăçлайрас çукчĕ. Ытти енчен те укçа-тенкĕ шырама, çынсем тупса тав тунилле ĕçлеттерме, учительсене те каникул кунĕсемсĕрех хăварма тивнĕ.

Антонина Владимировна физкультура учительне Сергей Степанова уйрăммăн палăртса тав сăмахĕ калать. Спортзалра паян епле хăтлă та йĕркеллĕ пулни – пĕтĕмпех унăн ĕçĕн кăтартăвĕ.

Ача садне шкулпа пĕрлештернĕ май кунта шкул çулне çитменнисем валли кĕçĕн ÿсĕмрисен тата тĕрлĕ ÿсĕмрисен ушкăнĕсене йĕркеленĕ. Ачасене шкула «Газель» микроавтобуспа илсе çÿрессине йĕркеленĕ.

Информаци ушкăнĕ Шетмĕпуçĕнчи Культура çурчĕн, кунта вырнаçнă библиотекăн ĕçĕсемпе те паллашрĕ. Культура çуртĕнче видеорегистраци аппаратурине, экстренлă чĕнсе илмеллин кнопкине те вырнаçтарнă. Тĕрлĕрен мероприятисем сахал мар йĕркелесе ирттереççĕ. Вĕсене ку ял çамрăкĕсем кăна мар, кÿршĕллĕ ялсенчен те хаваспах килсе çÿреççĕ. Хăйсен концерт программисемпе чăваш эстрада çăлтăрĕсене те чĕнсе илеççĕ. Кун пек чухне Культура çурчĕ нихăçан та пушă мар.

Информаци кунĕнче Культура çурчĕпе библиотекăра температура кăштах сивĕрех пулни палăрчĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Поликарпович çакна укçатенкĕ тĕлĕшпе перекетлĕрех пулма тивнипе ăнлантарчĕ. Нимĕн тума та май çук. Хутса ăшăтмалли хурансем кивелсе çитнĕ, вĕсем газ нумай çăтаççĕ. Укçине вара никам та нормăран ытлашши уйăрса памасть.

Тĕл пулусенче коллективсенче вăй хуракансем информаци ушкăнĕн членĕсемпе чуна уçса калаçрĕç. Çакăн пек тĕл пулусем, чуна çывăх калаçусем вара питех те кирлĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# «Хамăр продукци пахарах»

***Информаци кунне хутшăннă район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ В. Ананьев, выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ертÿçи Н. Яковлев Турай тата Ярославка ял тăрăхĕсенчи хуçалăхсенче пулчĕç, вĕсенчи ĕç-хĕлпе паллашрĕç.***

Чи малтанах ĕç ушкăнĕ Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх фермисенче пулчĕ. Эпир пынă самантра ĕне ферминче хĕрÿ ĕç тапхăрĕ пыратчĕ. Юсавçăсен ушкăнĕ пĕр цехри кантăксене пластикран хатĕрленипе ылмаштаратчĕ, ферма ĕçченĕсем те кунтах тимлетчĕç.

– Çак кунсенче кăна хывăх кÿрсе килтĕмĕр, унпа усă курма пуçланăранпа сăвăм татах та ÿсрĕ. Ĕне сĕчĕ чĕлхи çинче тенине тĕпе хурса вĕсем умĕнчен эпир пысăк пахалăхлă апат татмастпăр, – паллаштарать хуçалăх ĕçĕпе тĕп зоотехник Г. Васильева.

Палăртма кăмăллă, сĕт туса илессипе асăннă хуçалăхăн кăтартăвĕ районта чи пысăкки, ку енĕпе вĕсем çулсеренех малта. Ĕне йышне ют тăрăхран туянса килсе татах та йышлăлатнă. Кунта çирĕп йĕрке хуçаланни куç кĕрет. Выльăха вĕсен ÿсĕмне кура кăкарса тăратнă. Çакă пур енĕпе те меллĕ. Ытти ĕçченсен вара асăннă хуçалăхран тĕслĕх илмелли сахал мар.

– Йăлтах йĕркеллĕ те кăтартуллă, анчах выльăха тасарах тытсан татах та аванрах пулмалла, – терĕ Николай Семенович хăй сĕнĕвне шута илмеллине çирĕппĕн палăртса.

Ĕç кунĕ Ярославка ял тăрăхĕнче вырнаçнă А. Афанасьева хресчен (фермер) хуçалăхĕнче тăсăлчĕ. Кунта малтанхи ĕçе малаллах тăсса тата тĕллевлĕрех аталантарса эстони ăратлă сыснасем ĕрчетеççĕ, паянхи кун тĕлне вĕсем ултă сарайĕнче. Выльăх ÿсĕмне кура тĕрлĕ сарайне вырнаçтарнă. Фермăн пĕтĕмĕшле калăпăшĕ сакăр гектар йышăнать.

Эпир пынă самантра тăватă ушкăн тĕрлĕ ĕçпе тимлетчĕ. Пĕрисем хĕл сиввисем пуçланиччен керамзит блокĕнчен çурт купалаççĕ. Теприсем инçех мар вăрăм сарайсем тăваççĕ. Каркасне туса пĕтернĕ, часах тентпа туртăнтарма пуçлаççĕ. Хуçалăхра унпа усă курни экономика тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ. Виççĕмĕшĕсем тимĕр кăмакасем хатĕрлеççĕ…

Кашни сарай пуçĕнче уйрăм çăл чавнă. Ыттине те йăлтах меллĕ хатĕрленĕ, вăл е ку çук тесе шыраса чупмалла мар. Выльăхчĕрлĕх усрама акмалли-сухаламалли çĕр çителĕклĕ. Çавна май апатне те çителĕклĕ хатĕрленĕ. Саппас, хушма пулăшу чăрмантармасть тенĕ евĕр меллĕ самантпа усă курса Шупашкартан та турттараççĕ. Тĕрлĕ техника, агрегат çĕнетни те аван курăнать. Пĕтĕмĕшле илсен вара кунти ĕçе çирĕп тата пĕлсе йĕркелени, хуçалăха ĕçчен те пултаруллă ертÿçĕ ертсе пыни аван курăнать. Апла пулсан район экономикишĕн те тĕкĕ пулмалла.

Алина Александровна хуçалăхĕнче туса илнĕ продукцие кăмăллакансем йышлă. Вĕсем Муркашри пасарта аш-пăшпа кашни эрне кун тивĕçтереççĕ. Ашпа салăна тĕтĕмпе техĕмлемелли технологипе те анлă усă кураççĕ Афанасьевсем. Ку продукци уйрăмах çула тухакансемшĕн меллĕ. Халĕ вара Çĕнĕ çул тĕлне пилĕк, ултă килограмм таякан сысна çури саккас пыракан чылай. Паллах, кашниех тулăх сĕтелпе, техĕмлĕ çимĕçпе кĕтсе илме ĕмĕтленет уява. Хатĕр продукципе ытти регионсене те тăтăшах çитсе килеççĕ вĕсем.

– Çапла вара рынок ыйтăвне тĕпе хурса ĕçлеме, туянакан кăмăлне туллин тивĕçтерме тăрăшатпăр. Хамăр патри пахалăхлă продукцие, паллах, ют çĕр-шыврипе танлаштараймăн. Кунта яланах тин кăна хатĕрленĕ аш-пăш продукцийĕ çителĕклĕ, – паллаштарать хуçалăх ĕçĕпе Александр Аркадьевич.

Палăртма кăмăллă, çак кунсенче Афанасьевсен тăрăшуллă çемйи икĕ пысăк уява паллă тăвать. Апла пулсан вĕсен çывăх çыннисен ырă самахĕсем çумне эпир те хутшăнатпăр, ĕçре ăнăçу та çемьере килĕшÿ сунатпăр.

Асăннă хуçалăх ĕçĕпе паллашнă хыççăн С. Григорьевăн çак ял тăрăхĕнчех вырнаçнă «Фаворит» чикĕллĕ яваплăхлă обществинче пултăмăр. Кунта та ĕç пĕр вырăнта тăманни аван курăнать. Халĕ виçĕ сарай çуртне реконструкцилесси пырать. Пăрахăça тухнă ĕне ферминче Сергей Григорьев ертÿçĕ кайăк-кĕшĕк ĕрчетессипе тимлет. Пысăк сарайсенче тăватă пине яхăн кăвакал, пĕр пин çурă чăх-чĕп хĕвĕшет. Вĕсене тăватă çын пăхать.

Çапла вара икĕ аслă пĕлÿ илнĕ Шупашкар йĕкĕчĕ юхăннă фермăна çĕнĕ сăн-сăпат кĕртессишĕн ырми-канми тăрăшать. Йышлă кайăк-кĕшĕк валли витаминлă апат çителĕклĕ, тин кăна тухнă чĕпсем валли те ай сарăм хатĕр. Инкубаци комплекчĕсем кÿрсе килнĕ, хăшне-пĕрне вырнаçтарма та ĕлкĕрнĕ. Хĕрÿ тапхăр вара çуркунне пуçланать. Ун чухне чĕпĕ туянас текен питĕ йышлă. Паллах, пахалăхлă çăмартаран йышлă чăх-чĕп тĕрĕс-тĕкел тухасса шанса ĕçлеççĕ халĕ вĕсем.

Юлашки тапхăрта кайăк-кĕшĕк продукцине халăх анлăрах та анлăрах туянать. Çакă сывлăхшăн та усăллă, хакĕпе те меллĕ шутланать. Çитес вăхăтра кĕтĕве татах та йышлăлатма шухăшланă май, акмалли-лартмалли уй-хир лаптăкĕпе те тимлесшĕн.

«Фаворит» продукцине Чул хула облаçĕнчен, Мордва Республикинчен килекенсем ытларах ыйтаççĕ, хатĕрлесе çитерме ĕлкĕр кăна. Хуçалăх ертÿçи ĕç опычĕпе паллашма ытти региона та каять. Ыттисен ырă ĕçне тĕпе хурса обществăра 150 микроэлементран, чăн-чăн витаминран тăракан хлорелла çитĕнтерет. Унăн калапăшĕ ĕрченипе 10 литртан 120 литра çитет. Шывшур тĕлне пĕлмесĕрех кайăк-кĕшĕк шыв курăкĕпе апатланать.

– Инноваци çулĕ çине çирĕппĕн тăрса пуçланă ĕçе ытларах аталантарасса ĕмĕтленес килет, – терĕ С. Григорьев хăй ĕмĕчĕпе паллаштарнă май.

Çÿлерех асăннă икĕ хуçалăх та хăйсен ĕçĕсене пăрахăça тухма пуçланă фермăсенче тăватă çул каялла пуçланă. Паянхи кун тĕлне вĕсен аталанăвĕ куç умĕнче. Паллах, йывăрлăхĕ те çителĕклĕ. Апла пулин те вĕсем пысăк пахалăхлă продукцие ытти тăрăха та хăюллăнах сĕнме пултараççĕ.

– Йывăрлăхсене çĕнтерсе малашлăха пăхса ĕçлекенсем пулсан ял хуçалăхĕ аталанать. Кунта вара ыттисен те пуçаруллăрах та пултаруллăрах пулмалла, район экономикине хăпартма тăрăшмалла. Ĕçлемен объектсене вара аркатма памалла мар, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ В. Ананьев.

**Р. МАКАРОВА.**

## Ыран – Раççейри амăшĕн кунĕ

### ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Сире Анне кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Çак тĕлĕнмелле çутă уяв пире пурнăç кăтартса пăхса çитĕнтерекен, йывăрлăхсенчен хÿтĕлекен, хăй чĕри ăшшине парнелекен мĕн пур хĕрарăма чунтан юратнине, ырă суннине тата пĕтĕм кăмăлтан тав тунине палăртакан таса та çепĕç туйăмсемпе пуян.

Чăваш Енре амăшĕпе ача сывлăхне сыхласси, çемье институтне çирĕплетесси, çураласлăха хавхалантарасси патшалăх политикин тĕп çул-йĕрĕсем шутланаççĕ. Сăмахран, нумай ачаллă çемьесене республикăн амăшĕн (çемье) капиталĕ евĕр паракан 100 пин тенкĕлĕх хушма пулăшу çирĕплетнĕ. Ăна асăннă çемьесем 2012 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕш кунĕнчен пуçласа виççĕмĕш ача е ун хыççăнхи ачасем çуралсан илеççĕ. Çулталăк пуçланнăранпа çак социаллă пулăшу тĕсĕ валли 1500 яхăн сертификат уйăрса панă.

2013 çулта виççĕмĕш ача е ун хыççăнхи ачасем çуралсан ача валли кашни уйăхра паракан тÿлев вăя кĕрет. Ăна Чăваш Республикинчи çын пуçне тивекен вăтам тупăшран сахалрах тупăш илекен çемьесене ачасем валли çирĕплетнĕ пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе шайĕпе тÿлеме палăртнă. Малтанласа шутласа пăхнă тăрăх çав тÿлеве 2013 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа виççĕмĕш е ун хыççăнхи ачана çуратнă çемьесем 100 процента яхăнах илсе тăрĕç.

Йышăннă мерăсене пула республикăра 2012 çулта 15 пин ытла ача çуралнă, ку вăл пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен пин неппе ытларах. Çапла майпа эпир юлашки 20 çулта пуçласа демографин пурлă кал-кал аталанăвне тивĕçтертĕмĕр, кунпа, паллах, мухтанма та юрать. Мĕн пур шайри власть органĕсен юратупа илем, çураçулăх валли лайăх хÿтлĕх туса памалла тата кашни çемьех обществăри çирĕплĕхрен килекен ыранхи куна шанчăклăн кĕтме пултартăр.

Хаклă амăшĕсем! Пурсăра та хăвăр ачăрсене кашни кун парнелекен юратупа ачашлăхшăн, пулăшушăн чĕререн тав тăватăп. Сире тата сирĕн çемйĕрсене ырлăхпа телей, çирĕп сывлăх, мĕн пур лайăххине тата кĕтекен, телейлĕ те савăнăçлă пепкесем сунатăп!

**М. ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.**

### ХИСЕПЛĔ АННЕМĔРСЕМ!

Сире Ача амăшĕн кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп.

Пирĕнтен кашниншĕн чи çывăх çын вăл – анне. Эсир ачăрсене кун-çул парнеленипе пĕрлех пĕр канăç курмасăр вĕсене пурнăç çулĕ çине кăларассишĕн тимлетĕр. Мĕн ĕмĕр тăрăшшĕпех ывăл-хĕрĕрсем телейлĕ пулччăр тесе хăвăртан килнине йăлт тăватăр. Чăннипех те, аннерен хакли никам та çук. Никам ăнланмасан та, анне пире ăнланать. Никам каçармасан та, анне пире каçарать. Никам кĕтмесен те, анне пĕр вĕçĕм кĕтет пире, хăйсен ачисене. Тавах, аннемĕрсем, пире çуратнăшăн, юратнăшăн, ятланăшăн, çын тунăшăн, каçарнăшăн, ăнланнăшăн.

Юратнă аннесем! Эсир пулсан пÿртре те ăшăрах, çутăрах туйăнать, пурнăç тата илемлĕрех. Çемье ăшши те, унăн çути те эсирех. Иксĕлми ачашлăхăрпа юратăвăр кашни ывăлăрпа хĕрĕр валлиех çитет сирĕн. Тавах сире, аннемĕрсем, эсир пурришĕн, йывăр чухне пулăшнăшăн, ырă сĕнÿпе вăй панăшăн, ăш сăмахпа хавхалантарнăшăн.

Эсир ачăрсене тĕрĕс воспитани парса ÿстернипе пĕрлех кулленхи ĕçре тăрăшса вăй хуратăр, район, республика, çĕршыв экономикине çирĕплететĕр. Ĕçĕрсем ăнса пыччăр малашне те.

Сывлăхăр çирĕп пултăр, утас çулăр телейлĕ, пурăнас кунçулăр вăрăм килтĕр. Яланах ачăрсемпе, мăнукăрсемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Р. ТИМОФЕЕВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

# Амăшĕн телейĕ – ачасенче

Ытлари кун, ноябрĕн 20-мĕшĕнче, «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне районти кашни ял тăрăхĕнчен килнĕ ачасемпе амăшĕсем пуçтарăнчĕç. Пухăнма вара сăлтавĕ те чаплă – Пĕтĕм тĕнчери ача кунĕ тата Раççейри амăшĕн кунне халалланă уяв.

Çак уявсене пĕрле çыхăнтарса паллă туни тĕрĕсех пулчĕ пулĕ. Ача тата амăш тени яланах пĕрле, вĕсем уйрăлса тăма та пултараймаççĕ. Çут çанталăкĕ çапла тунă. Уява хутшăннă республикăри ачасен прависен уполномоченнăйĕн Муркаш районĕнчи представителĕ Федор Ягушов иерей та çакнах палăртрĕ. «Хĕрарăм, амăш – вăл пурнăç паракан. Эпир вара пурте ачасемшĕн пурăнатпăр», – терĕ вăл.

Ачана пурнăç панă хыççăн ăна



йĕркеллĕ пăхса çитĕнтересси – питĕ йывăр ĕç. Ачан хăйĕн ачалăхĕ пирки ырă та савăнăçлă самантсем ытларах асра юлччăр тесе ашшĕ-амăшĕн нумай тăрăшмалла. Ку тĕлĕшпе патшалăх та пулăшмасăр тăмасть: амăш (çемье) капиталĕ те, виççĕмĕш тата хыççăнхи ачасене çуратсан – тÿлевсĕр çĕр лаптăкĕ, çамрăк çемьесем валли – пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пулăшакан программăсем тата ытти тĕрлĕ çăмăллăх сахал мар хальхи вăхăтра. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев та, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Ванеркин та амăшĕсемпе ачисене уявсемпе саламланă май çакăн çинче те чарăнса тăчĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, районти хĕрарăмсен канашĕн ертÿçи Лилия Тарасова каланă сăмахсем те амăшсене хумхантармасăр хăвармарĕç. «Амăшсене пысăк наградăсем кирлĕ мар, вĕсемшĕн чи пĕлтерĕшли – сывлăхлă ачасем, вĕсем уçă сасăпа савăнса кулни, вĕсем телейлĕ пулни», – акă епле палăртрĕ вăл амăшĕн телейне. Çак чăнлăх пурнăçа паян кăна кĕмен, çут тĕнчере этем пуçланса кайнăранпах çапла пулнă та ĕнтĕ.

Ачасем ытларах кулччăр, савăнччăр тесе уявра вĕсемпе ятарлă тренинг ирттерчĕç. Унта хутшăннă кашни ача хăйĕн шухăш-кăмăлне палăртма пултарчĕ: пĕри çĕнĕ çул уявне чăтăмсăррăн кĕтет, тепри – çуралнă куна, виççĕмĕшĕ çар çынни пулма ĕмĕтленет... Çак ĕмĕтсене пурнăçлассинче амăшĕсен тÿпи пысăк. Пурнăçри тĕрлĕ лару-тăрупран мĕнле тухасси вĕсем тĕрĕс тунă йышăнусенчен килет. Çакăн тавра калаçрĕç те амăшсен тренингĕнче.

Уяв юрă-ташăпа, сăвă-юмахпа пуян пулчĕ. Муркашри «Путене» ача сачĕн воспитанникĕсем, Муркашри шкулта вĕренекенсем тата Ю. Жуков ертсе пыракан «Илем» ансамбль хăйсен пултарулăхĕпе пурне те тыткăна илчĕç.

Уяв амăшĕсене панă Тав çырăвĕсемпе, парнесемпе тулăх пулчĕ.



*Çатракассинчи Григорий Степанов уява хăйĕн куравĕпе килсе çитрĕ. Хевтесĕррисен йышĕнче пулнăран унăн Çĕрпÿ районĕнчи ятарлă шкулта вĕренме тивет иккен. Анчах та çак маттур каччă сывлăхлисенчен те ирттерет. Хăй аллипе касса ывăссем, ытти тĕрлĕ савăт-сапа илемлетме юратать вăл. Шкулти ертÿçĕ А. Федотов пулăшса пынипе хавхаланать каччă. Кăçалхи вĕренÿ çулĕнче Григорий шкул пĕтерет. Хыççăн хăйĕн пултарулăхне малалла аталантарас шухăшлăскер, училищĕне вĕренме кĕрес тĕллевлĕ.*

*Унăн куравĕпе пурте хавасланса, интересленсе паллашрĕç.*

Ачасем валли Н. Ванеркин пылак парнесем илсе килнĕ. Уява килнисене вара кашнинех çемçе тетте парнелерĕç. Вĕсене М. Пушкарева ертсе пыракан ал ĕç ăстисен кружокне çÿрекенсем хатĕрленĕ. «Россельхозбанкăн» Муркашри хушма офисăн ертÿçи И. Павлова Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхне, нумай ачаллă амăшне М. Колесниковăна Тав çырăвĕпе парне парса хавхалантарчĕ. Район администрацийĕн Тав çырăвне вара чылайăн илме тивĕç пулчĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕсем.**

# Хаваслă стартра – çемьесем



*«Чи пысăк çĕнтерÿ – хамăра хамăр çĕнтерни» – çак каларăша тĕпе хурса ăмăртрĕç юн кун район шайĕнче иртнĕ «Атте, анне тата эпĕ – спортпа туслă çемье» хаваслă стартсене хутшăнакансем.*

Районти çул çитменнисемпе ĕçлекен комисси членĕсем, социаллă хÿтлĕх пайĕн тата опекăпа попечительство секторĕн специалисчĕсем çемьесене «Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК-ра» кĕтсе илчĕç. Хăшĕсем кунта пĕрремĕш хут килнĕ мĕн. Çавăнпах ФСК директорĕ Александр Куликов сывлăха çирĕплетме май паракан çак пысăк комплекс тăрăх интереслĕ экскурси йĕркелерĕ.

Хаваслă стартсене малтанласа хутшăнас кăмăллисем, шел пулин те, пурте пуçтарăнайман. Чылайăшĕн сăлтавĕ – ашшĕсем аякка ĕçлеме тухса кайнинче. Хальлĕхе пурнăçри çак пулăмран пăрăнма çук... Анчах та сăмаха ăмăрту пиркиех тăсар. «Сывлăхри» ăмăртăва çичĕ команда хутшăнчĕ. Çав тери интереслĕ тупăшусем хатĕрленĕ хаваслă стартсене йĕркелекенсем (кунта маларах асăннă комисси секретарĕн Лариса Петровăн тÿпи пысăккине палăртса хăвармалла): скакалкăсемпе, обручсемпе, тĕрлĕ мечĕксемпе, теннис ракеткисемпе, михĕсемпе... – темĕнле хатĕрпе те тупăшрĕç çемьесем. Çемьери чи кĕçĕннисен е аслисен ячĕсене панă командăсем чăнах та хаваслансах ăмăртрĕç. Тупăшусем вăхăтĕнче, паллах, мала тухассишĕн тăрăшрĕç вĕсем, анчах та ăмăртăва сăнакансем çемьесемшĕн пĕрле пулнин савăнăçĕ пĕлтерĕшлĕ пулнине çăмăллăнах туйма пултарчĕç.

Нумай ачаллă, йывăртарах лару-тăрулла çемьесене хутшăнтарас тĕллевпе йĕркеленĕ çак ăмăртăва. Ахальтен мар «Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» ыр кăмăллăх марафонĕн счечĕ çине пирĕн районти предприятисемпе организацисем, уйрăм çынсем куçарнă укçа-тенкĕпе ачасем валли пысăк парнесем хатĕрленĕ – спорт костюмĕсем. Хаваслă стартсем вĕçленсен ачасем çĕнĕ костюмсене тÿрех тăхăнчĕç. Кашнин валлиех ятарласа çĕлеттернĕ тейĕн вĕсене – тăпăл-тăпăл та илемлĕ.

Кунсăр пуçне çакна та палăртса хăвармалла. Çак ăмăртăва йĕркелекенсем, уншăн яваплисем хутшăнакансенчен ытла сахалах та пулмарĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ А. Сидюшкин, ачасен прависен уполномоченнăйĕн районти представителĕ Федор Ягушов иерей, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. Ермолаев, спортпа туризм секторĕн ертÿçи В. Петров, районти полици пайĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен подразделени ертÿçи В. Алексеев, О. Яковлев участковăй тата çÿлерех асăннисем те. Çакă шăпах хамăр пурнăçлакан ĕçсемшĕн ответлăх туйăмĕ ÿснине кăтартать пулĕ. Çак яваплă ĕçченсен час-часах районти тĕрлĕ çемьесене тухса çÿреме тÿр килет. Апла кирек епле ĕçе те пĕрле пурнăçласан кăна ырă пĕтĕмлетÿ тума пулассине ăнланса ĕçлени куç кĕрет.



**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ÿкерчĕксенче: Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Семеновсен çемйи ăмăртура туслăхпа палăрчĕ; парнесем кашни ачана савăнтарчĕç.**

**Автор сăн ÿкерчĕкĕсем.**

# «Эпир аннесем пирки манмастпăр»



Çакнашкал пĕтĕмлетӳ турĕç ывăлĕсене Тăван çĕр-шыв интересĕсене хӳтĕлесе инçетри Афганистанти çар операцийĕсенче çухатнă амăшĕсем патĕнче пулсан районти интернационалист-салтаксем.

Паянхи сăн ӳкерчĕксенче эсир Афганистан вут-çулăмĕ витĕр тухнă ветеран-салтаксен пĕр ушкăнне çарти тусĕн вил тăпри çине палăк лартнă хыççăн тата çав паттăрăн амăшне куратăр.

– Тăван çĕр-шыв ума лартнă задачăсене вĕçне çити пурнăçларăмăр. Пурте каялла таврăнаймарăмăр. Çавăнпа та сăртлă-туллă çĕр-шывра пуç хунă тусăмăрсен ячĕсене упрасси, амăшĕсене чысласси – пирĕн пурнăç йĕрки, – терĕ Николай Михеев вил тăпри çине палăк лартса пĕтернĕ хыççăн интернационалист-салтаксен районти канашĕн ертӳçин çумĕ К. Петров **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕк)**.

Вăрçă вучĕ витĕр тухнă ĕнерхи салтаксем хăйсен укçи-тенкипе туянса лартнă палăк Турай ял тăрăхĕнчи Тушкасси çăви çинче 1987 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче Афганистанта пуç хунă Николай Юрьевича чыс туни пулчĕ. Çак ырă ĕç хыççăн тепĕр кăшт вăхăт иртсен К. Петровпа И. Колесников ветеран-салтаксем Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Мăн Тутаркассинчи тепĕр салтак амăшне Юлия Татаровăна лаç кăмаки туса пачĕç.

– Унтанпа чĕрĕк ĕмĕр хыçа юлчĕ. Анчах амăшĕн чĕринчи ырату хыçа юлчĕ-ши? Çук! Вăл пирĕн чĕрере ĕмĕрлĕх йăва çавăрчĕ. Аса илӳпе, сăн ӳкерчĕксене пăхнипе çеç лăпланать паян амăшĕн чĕри, – куççульне шăлса тав турĕ палăкшăн Таисия Михеева **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕк).**

Суворов яч. хис. хуçалăхра уй-хир бригадинче, ĕне тата сысна фермисенче вăй хунă хĕрарăма ывăлĕ салтакра пуç хунăшăн 50 çулта тивĕçлĕ канăва кăларнă. ЧР ял хуçалăх тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1981 ç.) 3 ача çуратса ӳстернĕ: Валя, Коля, Лена. Хĕрĕсемпе 4 мăнукĕ тăтăшах килсе çӳреççĕ пулсан та, Таиç аппа ывăлĕн сăн ӳкерчĕкĕнчен самантлăха та уйрăлмасть. Вăл çырнă çырусем, сарăхнă салтак блокночĕ, медалĕ-орденĕсем яланах алă айĕнче. Ман ума та вĕсене кăларса хурса амăшĕ ывăлĕ салтак кайсан çур çултан киле епле килнине тата ăна юлашки çула епле ăсатнине куççуль витĕр каласа пачĕ.



Вăхăтлă та вырăнлă пулăшу

– Юрать Афганистанта службăра пулнă районти ытти салтаксем манмаççĕ. Вĕсем çитсен ывăлăм килнĕнех туйăнать, – аллинчен сăмса тутăрне вĕçертмерĕ Таисия Ильинична.

«Кам юратăвĕн чикки çук, камăн кăкăрĕпе пĕтĕм тĕнче ура çине тăнă! Çынри пĕтĕм илемлĕх – Хĕвел çутипе Амăшĕн кăкăр сĕтĕнчен», – тесе çырнă Максим Горький писатель. Мĕн хушса калайăн кун çумне?

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Вăй-хăватпа ĕçченлĕх

# 41 çул иртрĕ фермăра



«Хам та асанне пултăм, анчах анне пĕçернĕ çăкăр шăрши паян та асран каймасть. Вăл пĕçернĕ çемçе çăкăр чĕлли çине чăкăт хурса çини – иртнĕ вăхăтри уяв – паянччен те манăçмасть. Халĕ вара хамăн мăнуксем эпĕ пĕçернĕ кукăль-çăмаха кĕтсе лараççĕ. Активсе пăхсан шăпăрлансем тутлă тесе ыталаса чуп тăваççĕ те савăнăç куççулĕ пит çăмарти тăрăх юхса анать», – терĕ сăмахăмăр аннесен кунĕ çине çитсе кайсан хăйне ĕçе хăнăхтарнă амăшне тав туса Н. Федорова.

Нина Пименовна Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çатракасси ялĕнче пурăнать. Ялта çуралса ӳснĕ вуншар-çĕршер ача пекех Нина та хăйĕн пĕтĕм пурнăçне ял хуçалăхĕпе çыхăнтарнă. Шкулта вĕреннĕ çулсенчех аслисене пулăшма фермăна çӳренĕскер 8 класс хыççăн малалла вĕренме шутламасть. Çапла вара ку вăхăта выльăх-чĕрлĕх патĕнчи ĕçсене ăнланса илнĕскер фермăна ĕне сăвакан пулса ĕçлеме вырнаçать. Çул хыççăн çул иртрĕ унтанпа, сахал мар шыв юхрĕ. Анчах ачаллах ĕçпе çывăх тăнă хĕр ачан ĕçлеслĕхне фермăри йывăрлăхсем хуçаймарĕç. Ĕçри вăрттăнлăхсене пĕр хăрамасăр алла илсе пычĕ. Паян иртнĕ çав çулсене çаврăнса пăхать те тĕлĕнет Нина аппа. Пĕр улшăнмасăр 41 çул ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн Çатракассинчи сĕт ферминче ĕнесене машинăпа сăвакан оператор пулса ĕçлерĕ-çке вăл. Çакăнта сĕт сăвакан операторăн асĕнче тĕрлĕ çулсенче йывăрлăхсене епле çĕннисем, тăрăшулăхшăн хуçалăх ертӳçисемпе район тата республикăпа Раççей шайĕнчен епле чысланисем куç умне тухрĕç пулас. Ферма ĕçченĕ çав вăхăтсенче медальсем, Хисеп грамотисем, тĕрлĕрен премисем чылай илнине пытармарĕ те. Кашниех ĕçри паттăрлăх палли-çке.

Нина Пименовна мăшăрĕпе (вăл вăхăтсăр çĕре кĕнĕ) 2 хĕрпе ывăл çуратса ӳстернĕ, пурнăç çулĕ çине кăларнă. Çак ӳсĕмри кашни карт хыçĕнчех амăшĕн фермăри хастар ĕçĕ туллин тăни курăнать.

Паян унпа пĕрле сарайĕнче Л. Степанова, Т. Обжелянская, Л. Львова операторсем ĕçлеççĕ. Кашниех 33-шер ĕне сăвать. «Манăн ĕçтешсем те амăшĕсем. Вĕсен ĕçĕ те хуçалăха аталантарнипе пĕрлех ачисене ура çине тăратассипе çыхăннă», – терĕ сыв пуллашнă май Нина аппа.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Ватлăх çулĕсене пăхмасăрах

«Путь Ильича» агрофирмăри Мăн Шаптакалла каякан автоçул хĕрринче вырнаçнă столовăй иртен-çӳрене тутлă апат шăршипе çеç мар, поварсен ăшă кăмăлĕпе те илĕртет. Кунта пĕрре апатланнă çын иккĕмĕш хут кĕретех. Типтерлĕ те вăрвар, çепĕç чĕлхеллĕ Маргарита Саптеевăпа Раиса Ремнева поварсем кирек мĕнле çанталăкра та хапăл тăваççĕ çав, апатланакансен кăмăлне туллин тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Агрофирма ĕçĕсем ăнса пынинче вĕсен тӳпи те курăмлă.

Раиса Васильевна – пилĕк ача амăшĕ. Миçе çынна тутлă апат çитермен-ши вăл тĕрлĕ çĕрте нумай çул поварта ĕçлесе, мĕн чухлĕ тав сăмахне тивĕç пулман-ши? Нихăçан та пуç уснине, салхуллă çӳренине курман теççĕ ун çинчен пĕлĕшĕсем. Пурне те ыррине кăна сунакан çак хĕрарăм хăй те яланах телейлĕ, йăл кулса çеç пурăннă пек туйăнать. Анчах туйăнать çеç çав. Шел пулин те, ыррипе усалли юнашарах çӳреççĕ тейĕн. Пурнăç Раиса Васильевнăна та тӳнтер енне кăтартса хыттăн тĕрĕсленĕ. Çапах та вăл йывăрлăхсене çĕнтерсе ура çине татах та çирĕпрех тăма хăнăхнă.

Рая Отар ялĕнче (халĕ вăл район картти çинче те çук ĕнтĕ) тĕнчене килнĕ. Пилĕк ачаллă çемьере асли пулнă май вăл ялти ытти ачасем пекех пĕчĕклех çĕр ĕçне хутшăннă. Ал ĕç ăсталăхне ăша хывма тăрăшнă, шăллĕсемпе йăмăкĕсене, хăех ăсталанă пуканисене «тутлă» сăйлама тăрăшнă. Кашмашри сакăр çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухсан тӳрех Шупашкара повар ăсталăхне алла илме çул тытнă.

Миçе каччă ăмсанса пăхман-ши çутă сăнлă, кăмăллă, тăрăшуллă хĕр çине? Анчах канмалли кунсенче кукамăшĕ патне хăнана килнĕ пикене Чамăш каччи Герман Блинов пĕрре курсан куçран вĕçертмен. Райăпа Гера пĕрлешнĕ те Чамăш ялĕнче çĕнĕ урам пуçласа капăр, хăтлă çурт лартса пурăнма пуçланă. Çĕнĕ мăшăрăн пĕрин хыççăн тепри виçĕ пăхаттир – Алеша, Андрей, Миша çуралнă. Çамрăк çемье вăй илсе çирĕпленсех пырать. Анчах унăн телейне «симĕс çĕлен» хупăрлать. Хăйĕн ашшĕпе пулса иртнĕ пĕр ӳсĕр харкашура Гера пурнăçран уйрăлать.

Мĕн тери инкек, мĕнле пысăк çухату! Хĕрарăм виçĕ пĕчĕк ывăлĕпе тăрса юлать. Çук, пĕччен мар. Райăна хăйĕн тăрăшулăхне кура тус-юлташĕсем, тăванĕсем пулăшни хавхалантарать, шăпăрланĕсем сывă, çирĕп, ăслă-тăнлă çĕкленсе пыни çĕнĕ вăй хушать. Кичемлĕхпе тунсăх валли вăхăт юлмасть çамрăк хĕрарăмăн. Нимĕнле мулпа танлаштарайми виçĕ тĕпренчĕкĕ пур-çке унăн. Вĕсемшĕн пурăнмалла! Пĕтĕм вăйне, вăхăтне, тӳсĕмлĕхне вĕсемшĕн парать вăл. Вĕсем çывăрса кайсан çут çанталăк илемне, чечексемпе кайăксен хитрелĕхне тĕрре хывать. Хăйне ăнланма, пулăшма, савăнăçĕпе хуйхине çурмалла пайлама хатĕр çын пурри те çунатлантарать. Кӳршĕ ял каччи, хăйне çирĕп шанакан Владимир Ремнев, унăн ывăлĕсен ашшĕ пулма иккĕленсе, шикленсе тăмасть. Владимирпа Раиса çемье лавне пĕрле туртма тытăнаççĕ. Пĕрпĕрне хисеплени, ăнланни, пулăшни çемьене татах çирĕплетет. Лайăх, мал ĕмĕтлĕ шухăшсем, çепĕç туйăмсем, ырă ĕçсем чунсене сиплемелли чи лайăх шерпет çав. Часах çемьере тепĕр ывăл – Борис хушăнать. Тăватă пăхаттир хыççăн çут тĕнчене хĕвел сăнлă Олеся килет. «Вăл çуралнăшăн пирĕнпе пĕрле савăнман çын та юлмарĕ пуль таврара», – аса илет Раиса Васильевна. Вĕрене те, спортра та, ытти ĕçсенче те савăнтарать Олеся. Халĕ ĕнтĕ вăл Чăваш патшалăх педагогика университечĕн физвоспитани факультечĕн студентки.



Ачисене чунтан юратнă пулин те, ачашланса найкăшма паман Раисăпа Владимир. Вĕсем пĕри теприччен ĕçченлĕхе, тирпейлĕхе, чун пахалăхĕн ырă енĕсене упрама вĕренсе ӳснĕ. Ывăлĕсем пурте çар хĕсметĕнче пулса Тăван çĕр-шыв умĕнчи сăваплă тивĕçе пурнăçланă, ырă ятсемпе, наградăсемпе таврăннă. Халĕ хамăр районта яваплă вырăнсенче ĕçлеççĕ. Мăшăрĕсене те инçетре тата вăрах шыраман йĕкĕтсем. Маттур каччăсем валли сатур пикесем – икĕ Надя, Оля юнашар ялсенчех ӳссе çитĕннĕ.

Халĕ ĕнтĕ çемьене мăнуксем те хитрелетеççĕ. «Маçаккипе мамакки пĕлĕм пĕçереççĕ», – текеннисем çиччĕн Раиса Васильевнăпа Владимир Борисовичăн. «Пурнăç йывăççи татах та туратсем хушса ешермелле-ха. Борисра Олеся çемьеленме те ĕлкĕреймен. Килес кин тата пулас кĕрӳ вырăнĕсем пушах.

Ялти хĕрарăм вăл – фермер. Унăн хăйне тата çемйине апат-çимĕçпе, хăй çыхнă чăлха-нускипе тивĕçтерме агроном та, ветеринар та, доярка та пулма тивет. Çапах та уншăн чи пысăк телей – пĕтĕм çемье çав сĕтел тавра пĕрле пуçтарăнни. Раиса Васильевна та çав хаваслă самантсене тӳсейми кĕтет. Сĕтел çинче вара ашĕ те, сĕчĕ те, çăмарти те, улмиçырли те – веçех тăван анкартинче йышпа çитĕнтерни. Пĕрле пухăнсан кулăш-халап та тупăнсах тăрать, шӳт туса çисен шӳрпе татах та тутлăрах.

Çемьере кăна мар, обществăлла ĕçсенче те, клубра та кĕтнĕ çын Раиса Васильевна. Вăл ветерансен хорне çӳрет. Ĕне сунă чухне те, çум çумланă чухне те юрласа ĕçлет-ха хастар хĕрарăм. Анчах хорта чун уççи – юрăсăр пуçне тантăшсемпе, пĕлĕшсемпе тĕл пулни, калаçни-шӳтлени кăмăла хăпартать.

Çапла, хаваслă, ырă кăмăллă, савăнăçĕпе ыттисене те хавхалантаракан çынсем сахалрах чирлеççĕ, чирлесен те çăмăллăнрах сывалаççĕ, нумайрах пурăнаççĕ. Вĕсене ватлăх часах хăваласа çитеймест. Раиса Васильевна – вĕсен йышĕнче. Акă паян та Ремневсем «Путь Ильича» хуçалăха çăмăллăн та патваррăн утаççĕ. Владимир Борисович машинăпа трактор паркĕнче хастарлăх кăтартать, Раиса Васильевна кунти ĕçченсем валли тутлă та техĕмлĕ апат хатĕрлеме васкать.

**Н. ЗАХАРОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Раиса Васильевнăпа Владимир Борисович Олесьăпа, вăл республикăри ăмăртуран çĕнтерӳпе таврăннă хыççăн.**

# «Кĕрĕк арки йăвалама» вăхăт пулман

**Кил картинче ĕç чакманни пурăнма вăй-хал хушать**



1930 çулхи нарăсăн 3-мĕшĕнче 6 ачаллă хресчен çемйинче çуралнă Тамара Романовăн шăпа пӳрнипе çăмăл мар пурнăç çулĕпе çын хушшине тухма тивнĕ. Çавăнпа та ĕç малти вырăнта пулни ачаранпах унăн пурнăçĕн тĕп никĕсĕ пулса тăнă.

Хачăк тăрăхĕ. Тĕп çул-йĕртен нумаях та мар шаларах вырнаçнă ялсем. Нихăçан та малашлăхсăр ялсен шутĕнче пулман вĕсем. Çавăнпах-тăр Тамара ача чухне те, ӳсерехпе те тăван ен илемне, çывăх вăрмансен сиплĕхне, кунти уçă сывлăша урăх вырăнпа улăштарма шухăшламан та. Пачах та урăхла – ял пурнăçне, çĕр ĕçне, кӳршĕ-аршă хуйхи-суйхине ытларах ăша хывма тăрăшнă вăл. Ашшĕпе амăшĕ 4-шар çул çеç вĕренме мехел çитерни, ашшĕ – Фома Скворцов – 10 çул Буденăйпа пĕрле службăра тăни хĕр пĕрчине ачаллах ытларах ӳсĕм тума йыхравланă. Çак ĕмĕтпе пĕлӳ çулĕпе пынă хĕр ӳсерехпе медицина сестри пулса тăнă. Мăн Сĕнтĕрти пульницăра, Каршлăхри санаторире тĕрлĕ çулсенче сывлăх хуралĕнче ĕçленĕ. Ĕçрен хăраманскер качча тухсан ялти фельдшерпа акушер пунктĕнче санитаркăра та вăй хунă.

– Ĕçрен хăраман эпĕ. Ывăлăмпа хĕрĕмрен те, мăнуксенчен те паян кунччен çавнах ыйтатăп. Альбина хĕрĕм Çĕнĕ Шупашкарта медицина сестринче ĕçлесе çемье династине малалла тăсать. Герман вара ашшĕн ĕçне – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин участникĕн тимлевне, 63 çул водительте ĕçленĕ пурнăç утăмне – малалла тăсать. Вĕсен çак тăрăшулăхĕ эпир хамăр хыççăн тарăн йĕр хăварни пирки калать, – васкамасăр пуплерĕ ĕçпе вăрçă тата медицина ĕçĕн ветеранĕ Т. Романова. Çапла калаçса Тамара Фоминична **(сăн ӳкерчĕкре)** кăвакалсене кăнтăрлахи апат пама маннă тесе мана кил картине ертсе тухрĕ. Пирĕн калаçу вара самантлăха та чарăнмарĕ. Манăн çĕнĕ пĕлĕшĕм те çулĕсене кура мар сăмахлама маçтăр.

Ĕçпе вăрçă ветеранĕ паян ывăлĕн ĕçчен çемйипе ыр курса пурăнать. Пĕрлехи тăрăшулăхпа килти хушма хуçалăхра ĕни те, пăрăвĕпе сыснисем те, кăвакалĕсемпе чăххи-чĕпписем те пур. Тĕрĕссипе каласан Тамара Фоминичнăн килти хушма хуçалăхĕнче выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк çулленех ăнса хунанă.

– Кăшт ĕлĕкрех мăшăрăмпа çулленех сыснасем усраттăмăр. Кĕр çитсен вĕсене пусса тирпейлесен пуханнă укçана яланах перекет банкне упрама хураттăмăр. Çав укçапах мăшăрăм 1976 çулта «Москвич» автомашина туянчĕ, – аса илчĕ асанне.

– Килти хушма хуçалăха патшалăх пулăшма пуçланине тĕрĕс тесе хаклатăп. Ахальлĕн пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем арканаççĕ, выльăх йышĕ чакать, аш-какайпа ытти продукци илесси сахалланать. Ку ĕçре патшалăх пулăшăвĕпе усă курни питех те вырăнлă, – паллаштарчĕ ветеран хăй килти хушма хуçалăха аталантарасси пирки мĕн шухăшланипе. – Эпирçке хăй вăхăтĕнче килте выльăх-чĕрлĕх усрасах автомашина та туянтăмăр, пӳрт-çурт та çавăртăмăр.

Кунта эпĕ Тамара Фоминичнăран Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи епле пуçланнипе тата пирĕн халăх Аслă Çĕнтерĕве епле кĕтсе илнипе кăсăклантăм:

– Тамара Фоминична, пирĕн çĕршывшăн çав хурлăхлă тата савăнăçпа тулнă кунсене эсир астăватăрах ĕнтĕ. Каласа памăр-и?

– Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланни – куççульпе тулнă хурлăхлă самант. Ăна тĕрĕссипе нумай çул иртнине пăхмасăрах аса та илес килмест. 11 çулхи ачасем урам тăрăх выляса пыратпăр. Пире хирĕç Анаткас Хачăкра пурăннă Макарий пиччене ăсатма тухнă хĕрарăмсем макăрса пыраççĕ. «Ма макăратăр?» – тесе ыйтрăм та пĕринчен, вĕсем мана вăрçă тухни çинчен тата Макарий пичче фронта тухса кайни пирки пĕлтерчĕç. Календарь çинче 1941 çулхи çĕртме уйăхĕн вĕçĕччĕ. Кайран Макарий пичче вăрçăран килнине те астăватăп. Вăл шинельпеччĕ, аманнă аллине шинель айне пытарнăччĕ, – аса илӳ çăмхине салтрĕ асанне. – Çĕнтерӳ пулнă чух эпир Мăн Сĕнтĕр шкулне çӳреттĕмĕр. Пĕр ирхине Мăн Тутаркассине кĕтĕмĕр те хĕрарăмсем пĕр-пĕрне ыталаса макăрнине куртăмăр. Унта пысăк радио пурччĕ. Халăх ун патне пуханнă та пурте савăнатчĕç. «Вăрçă чарăннă, ачасем!» – терĕç вĕсем пире. Эпĕ вара çак хыпара пĕлтерме каялла анне патне киле ыткăнтăм. Шкула кайсан çав кун учительсем пире «Вставай, страна, огромная» юрă юрлаттарса стройпа уттарни, фронтра 2 ывăлĕпе упăшкине çухатнă Клара Клементьевна учительница чарăнмасăр макăрни паян та асра, – терĕ кăвакалсене тырă хурса панă май ĕçпе вăрçă ветеранĕ.

Çавнашкал йывăрлăха чăтса ирттернĕ ватăсем паян та килти хушма хуçалăха аталантарассипе вăй хурса ĕçлени – вĕсен черетлĕ паттăрлăхĕ. Патшалăх пулăшăвĕ кунта нихăçан та ытлашши пулмĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

# «Ачасем чипер пулсан эпир те пурăнатпăрах»

Т. Николаева, Г. Сорокина тата Ю. Михайлова **(сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)** кашни ир хăйсен ĕçне тĕрĕслеççĕ – «Моргаушавтотехсервис» пĕрлешӳре вăй хуракансем çак кунсенче Муркашри Культура çуртне юсаса илемлетессипе тăрăшаççĕ.

«Шалти стенасене çĕнĕ сăн кĕртнĕ ĕнтĕ, халĕ сивĕ çанталăка пăхмасăрах хĕрарăмсем тулашĕнчи стенасене тимлесех çĕнетеççĕ. Хастар ĕçлеççĕ»,– пĕлтерет Культура çурчĕн директорĕ Фаина Григорьева.

Ĕçри пур вăрттăнлăха та вĕренсе çитнĕ ĕнтĕ штукатур-малярсем. Тамара Васильевна акă 34-мĕш çул, Галина Владимировнăпа Юлия Васильевна иккĕшĕ те 1982 çултанпах вăй хураççĕ пĕрлешӳре. Вĕсен ылтăн аллисем миçе çурта илемлĕ «тутăр çыхтарман-ши»,



миçе çĕнĕ çурт тăвассине хутшăнман-ши?..

Çак маттур пикесене пĕрлештерекенни вара ĕç кăна мар. Вĕсем виççĕшĕ те амăшсем, кукамай-мамаксем. Амăш пулма йывăр-и тесе ыйтсан, «çапла» теессе кĕтнĕччĕ. Вĕсем кăшт шухăшланă хыççăн: «Лайăх», – терĕç. «Ачасем пĕчĕккĕ чухне ачасем ан чирлеччĕр кăна тесе, хамăр сывă та тĕрĕс-тĕкел пурăнсан вĕсем те пурăнаççех тесе шухăшлаттăмăрччĕ. Халĕ вара ачасем чипер пурăнсан эпир те пурăнатпăрах тесе шухăшлатпăр», – пурнăç малалла кайнине тата ăрусем хушшинчи çыхăнăва çапла палăртаççĕ ĕçчен хĕрарăмсем.

Вĕсен ачисем ӳссе çемьеленнĕ ĕнтĕ, çапах та: «Анне, мĕнле пурăнатăн? Укçа-тенкĕ кирлĕ мар-и?» – тесе ыйтни питĕ паха пулнине калаççĕ çак амăшсем. «Ачасен укçи, паллах, кирлĕ мар пире, ыйтни, пирĕн пурнăçпа интересленсе тăни пĕлтерĕшлĕ. Çакă татах та пурăнма вăй хушать», – çирĕплетсех калаççĕ çемье ăшшине упракансем.

**Н. ДИМИТРИЕВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Сăн ӳкерчĕк айăплать

Вăхăт тăвать хăйĕннех –
Ватăлатпăр кунпала,
Кĕрхи çилĕ вĕрнипех
Тайăлатпăр пулмалла.

Кама кирлĕ тин эпир,
Камран пулăшу ыйтас?
Асăрхамаççĕ пире
Ни хуçа, ни депутат.

Ватлăх çулĕ çăмăл мар,
Иртрĕ çамрăклăх пит час.
Пусра пĕр шухăш кăна –
Пенсиччен епле чăтас?



***Районти чылай ялта хальхи вăхăтра çакăн пек сăн ӳкерчĕк çĕнĕлĕх мар. Асăннă сăн ӳкерчĕке вара Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çатракасси ялĕнче тунă.***

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Кивçене вăхăтра парса татмасан

Хаçатăн кăçалхи 75-мĕш номерĕнче эпĕ укçа кивçен панине саккунсене пăхăнса тĕрĕс йĕркелемелли пирки (расписка пирки) кĕскен ăнлантарса панăччĕ. Паян вара расписка тăрăх е кредит килĕшĕвĕ тăрăх укçана вăхăтра тавăрса паманни пирки сăмах пулĕ.

Малтанах çакна асăнса хăвармалла: икĕ енĕн хутшăнăвĕсем РФ Гражданла кодексăн 42 пайĕпе йĕркеленсе пыраççĕ.

Çапла, Гражданла кодексăн (малалла ГК) 807 тата 809 статйисемпе килĕшӳллĕн пĕри (кивçен паракан) теприне (кивçен илекен) укçа е ытти япалана харпăрлăха парать, илекен вара шăпах çавăн чухлĕ укçа-тенкĕ е шăп çавăн пек пахалăхлă тата çавăн чухлех япала каялла тавăрса пама пулать.

Кредит килĕшĕвĕпе килĕшӳллĕн банк е кредит паракан урăх организаци (кредит паракан) кредит илекене килĕшӳре палăртнă условисем тăрăх унта кăтартнă укçа-тенкĕ суммине пама тивĕç. Кредит илекен вара илнĕ укçа-тенкĕне тавăрса пама тата унăн процентĕсене те тӳлеме шантарать.

РФ ГК 309 статйипе çак шантарăва тивĕçлипе тата саккунпа килĕшӳллĕн пурнăçламаллине çирĕплетнĕ.

ГК 811 статйин 1 пайĕпе килĕшӳллĕн, саккунпа е займ килĕшĕвĕпе урăххине пăхса хуман пулсан, кивçен илекен укçана каялла вăхăтра тавăрса памасан, çав сумма тăрăх процент тӳлеме тивĕç. Çакна ГК 395 статйин 1 пайĕпе çирĕплетнĕ. Çапла вара килĕшӳре палăртнă процент суммине те, укçа тавăрса памалли кунран тытăнса малаллахи кунсемшĕн çак процента та тӳлемелле пулать.

ГК 809 статйин 1 пайĕпе килĕшӳллĕн, саккунпа е займ килĕшĕвĕпе урăххине пăхса хуман пулсан, кивçен паракан кивçен илекенрен килĕшӳре ятарлă условисемпе тата калăпăшĕпе палăртса процент илме ирĕк пур. Килĕшӳре процент калăпăшне палăртман пулсан укçа-тенкĕпе усă курнăшăн процент калапăшне кивçене тавăрса панă чухнехи кун çав тăрăхри банк процентĕн ставкине никĕс вырăнне хурса шутлаççĕ.

ГК 811 статйипе килĕшӳллĕн палăртса хунă процентсем укçа-тенкĕ тĕлĕшпе тивĕçсене пурнăçламаншăн гражданла право ответлăхĕ шутланаççĕ. Асăннă процентсене кивçене вăхăтра тавăрса паманшăн шыраса илеççĕ. Ăна кивçенпе усă курнишĕн тӳлемелли процент пулнине пăхмасăрах тӳлемелле. Кивçенĕн тĕп суммине тӳлесе татмалли кунчченхи процентсене вăхăтра тӳлеменшĕн урăх процент хумаççĕ (кивçен панине илни пирки тунă килĕшӳре кун пирки ятарласа çырман е саккунпа çирĕплетмен пулсан).

Займ килĕшĕвĕпе кивçене пайăн-пайăн тӳлессине çирĕплетнĕ пулсан, кивçен тавăрса паракан черетлĕ тӳлеве вăхăтра татмарĕ пулсан, кивçен паракан юлнă суммăна килĕшӳре кăтартнă вăхăтченех тавăрса пама ыйтма ирĕк пур (ГК 811 статйин 2 пайĕ).

Кредит организацийĕ кивçен илнĕ укçа-тенкĕне, унпа усă курнăшăн тӳлемелли процента тата тӳлев срокне пăснипе çыхăннă процента тӳлемесен банкăн суда искпа тухма ирĕк пур.

Анчах та ГК 333 статйин 1 пайĕнче тӳлев срокне пăснипе çыхăннă процент (неустойка) ытла та пысăк пулсан суд ăна пĕчĕклетме те ирĕклĕ. ГК 330 статйипе неустойка тесе кивçене тӳлесе таткан хăйĕн тивĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçламаннине е ĕçе вăхăтра пурнăçламаннине калаççĕ. Çапла майпа вара гражданла саккунсен пуххи неустойкăна тивĕçе пурнăçламалли май тесе палăртать, кунпа пĕрлех суда унăн виçине саккунпа килĕшӳллĕн пĕчĕклетме те ирĕк парать.

Çакă РФ Конституци сучĕн 2001 çулхи мартăн 14-мĕшĕнчи 80-О номерлĕ палăртăвĕпе килĕшсе тăрать. Çапла майпа суд неустойка виçине пĕчĕклетме пултарни пĕр çыннăн прависемпе ирĕкĕсене хӳтĕлени теприн прависемпе ирĕкĕсене пăсмалла маррипе çыхăнса тăрать. Ăна РФ Конституцийĕн 17 статйин 3 пайĕнче çирĕплетнĕ.

Калаçăва пĕтĕмлетнĕ май акă мĕн каламалла. Кунта çырса ăнлантарнине шута илсе кивçен тӳлекенĕн укçа-тенкĕне вăхăтра тӳлейменнипе неустойка тӳлемелле пулса тухсан вăл суда ходатайствăпа тухса унăн виçине пĕчĕклетме ыйтма пултарать. Ĕç практикинче вара кредит е кивçен паракан тĕрлĕ виçеллĕ неустойка тӳлеме ыйтса искпа тухнă тĕслĕхсенче парăмçăн тӳлемелли виçинчен пысăкрах виçеллĕ неустойка шыраса илни пулман.

**С. ТРИХАЛКИН,**
**ЧР Муркаш район сучĕн судйи.**

# Пĕлтерӳсем. Объявления

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:140501:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Иванов Владимир Юрьевич, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, д. Шептаки, ул. В. Егоровой, д. 10.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:140501:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, территория землепользования СХПК им. Ленина, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:140501, площадью 1,33 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

***

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:031001:210, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Каргина Лидия Николаевна, адрес: 429536, Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Мемеккасы, ул. Центральная, д. 6.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Петровым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-30. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:031001:210. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Волга», земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:030501.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

***

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:031001:210, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Сурина Валентина Васильевна, адрес: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Вурманкасы, ул. Сурина, д. 60.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:031001:210. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

***

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:031001:210, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Муниципальное образование – Ильинское сельское поселение Моргаушского района Чувашской Республики, находящийся по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Тренькино, ул. Новая, д. 5.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:031001:210. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельного участка

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики извещает о предполагаемом предоставлении земельного участка из категории «земли сельскохозяйственного назначения», расположенного в кадастровом квартале 21:17:090701 для сельскохозяйственного производства площадью 295999 кв.м. муниципальному бюджетному учреждению «Средняя общеобразовательная школа №48» г.Чебоксары Чувашской Республики.

Заявки принимаются в течении месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 313, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.




**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 4-10.**

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 10-10.**

В объявлении о согласовании проекта межевания земельного участка, опубликованном в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 07.04.2012 г. № 26 (7987), в 6 стр., в последней колонке, в 3 абзаце снизу, допущена опечатка. Вместо «21:17:281001:1» следует читать «21:17:281001:2».

***

**В Нижний Новгород требуются рабочие на сборочное производство автофургонов и спецавтотехники, также газоэлектросварщики с опытом работы на полуавтомате. Вахтовый метод (две недели через две). Питание, проживание бесплатно. Выезд группами до предприятия. Соц. гарантии. З/п 25000-40000 руб. в месяц. Тел.: 8-908-766-41-45 (Н.Новгород), 8-906-386-56-82 (Чувашия). 1-8.**

***

**Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. Парковая площадью 64,1 кв. м., на втором этаже трехэтажного дома. Тел.: 8-909-305-29-40.**

***

**Тăхăр уйăхри хура-шурă тĕслĕ чупман тынашки сутатăп. Тел.: 8-937-371-98-37.**

***

**Вăкăр, пăру, сурăх туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13.**

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТОГО АУКЦИОНА**

В соответствии с постановлением администрации Моргаушского района Чувашской Республики №963 от 02.11.2012г., постановлением администрации Моргаушского района Чувашской Республики №965 от 06.11.2012г. отдел имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района Чувашской Республики проводит в каб. №312 с.Моргауши, ул. Мира, дом 6, открытый по составу участников и форме подачи предложений по цене аукцион на право заключения договора аренды нежилого помещения площадью 154,2 кв.м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, комнаты №5, 6. Начальная цена – 366600 руб., задаток – 183300 руб., «шаг аукциона» - 18330 руб. Заявки принимаются в рабочие дни с 8 час. до 17 час. в период с 24 ноября 2012г. по 19 декабря 2012 г. (включительно) по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. №312. контактные телефоны 62-2-66, 62-5-99.

Дата определения участников аукциона 21 декабря 2012 г.

Дата проведения аукциона 24 декабря 2012 г.

Для участия в аукционах претенденты одновременно с заявкой представляют следующие документы:

юридические лица:

- заверенные копии учредительных документов;
- документ, содержащий сведения о доле Российской Федерации, субъекта Российской Федерации или муниципального образования в уставном капитале юридического лица (реестр владельцев акций либо выписка из него или заверенное печатью юридического лица и подписанное его руководителем письмо);
- документ, который подтверждает полномочия руководителя юридического лица на осуществление действий от имени юридического лица (копия решения о назначении этого лица или о его избрании) и в соответствии с которым руководитель юридического лица обладает правом действовать от имени юридического лица без доверенности;

физические лица предъявляют документ, удостоверяющий личность (представляют копии всех его листов).

В случае, если от имени претендента действует его представитель по доверенности, к заявке должна быть приложена доверенность на осуществление действий от имени претендента, оформленная в установленном порядке, или нотариально заверенная копия такой доверенности. В случае, если доверенность на осуществление действий от имени претендента подписана лицом, уполномоченным руководителем юридического лица, заявка должна содержать также документ, подтверждающий полномочия этого лица.

- опись представленных документов.

Банковские реквизиты для перечисления задатков:

финансовый отдел администрации Моргаушского района (Администрация Моргаушского района), ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123000012, р/счет: 40302810775140000005 в Чувашском ОСБ №8613 г. Чебоксары, кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609.

Назначение платежа – задаток за участие в аукционе 24 декабря 2012 г.

Победителем аукциона признается участник, предложивший за объект наибольшую цену. Срок подписания договора аренды объекта – не ранее 10 дней с даты подведения итогов аукциона.

***

**Продаются: крупные племенные гуси, можно тушками; кролики ризен; щенки немецкой овчарки. Также на продажу ноутбук DELL, МФУ Canon, автомобиль Приора хэтчбек недорого. Тел.: 8-927-66-55-900. 2-2.**

***

**Ремонт стиральных машин и микроволновых печей. Тел.: 8-952-029-80-76.**

***

**Ĕне, вăкăр, пĕчĕк пăру, сурăх туянатпăр. Тел.: 8-905-343-60-63. 8-10.**




**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 8-13.**

***

**Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматура, цемент, сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитка, забор, беседка, теплица, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т. п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-4675, 8-927-880-0483. 10-10.**

***

**Работа в Москве и МО: фасовщицы, упаковщицы, грузчики, комплектовщики. Жилье, питание, транспорт – БЕСПЛАТНОЕ. Вахта: 15, 20, 30, 45 дней. З/п: от 27 000 (своевременная).Тел.: 8(8352)36-03-32, 36-42-92. 3-5.**

***

**ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ (доломитовый, гранитный, известковый), КЕРАМЗИТ, ПЕСОК (речной, карьерный), БЕТОН, ТОРФ, с доставкой до 30 т. за 1 рейс. Тел.: 8-927-668-70-15. 12-12.**

***

**Работа для мужчин и женщин. Оплата высокая, обед и проезд на работу и обратно бесплатно (со всей территории района). Тел.: 8-905-343-19-10, 8-927-850-19-10. 2-5.**

***

**Октябрĕн тăваттăмĕшĕнче пĕрремĕш пăрулană хурашурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-937-371-24-55.**

***

**Услуги манипулятора на базе КамАЗ. Кузов 6 м, грузоподъемность 4 т. Тел.: 8-937-376-20-05.**

***

**Лайăх типĕтнĕ çерем утти сутатăп. Тел.: 8-937-379-53-09.**

***

**Утă тата вутă туянатăп. Тел.: 8-927-853-67-06.**

***

**Требуются автомойщики муж. и жен. (до 40 лет) можно без опыта работы, з/п 10000–15000 рублей. Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23 (территория «Сельхозтехники»). Тел.: 8-927-844-78-33. 2-2.**

***

**В швейную мастерскую в с. Б. Сундырь на постоянную работу требуются: швеи и швеи-закройщицы (трудовой договор). Тел.: 8-919-661-79-76. 2-2.**

***

**Продам шерсть осеннюю битую, оптом. Тел.: 8-917-908-65-75. 2-3.**







**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ от 3000 руб. Установка, гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 5-10.**

**Осенняя распродажа: мотоблоки, мини-тракторы, навесное оборудование, снегоуборочная техника, запчасти, ремонт. Тел.: 8-967-470-31-43. 7-12.**




**Спутниковое цифровое телевидение высокой четкости FULL и HD. Триколор 7300 руб. Телекарта 3000 руб. с. Моргауши. Тел.: 8-906-385-29-30. 8-10.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 6-10.**

**МОСКВА – ВАХТА!!!**
В Москву и Московскую обл. требуются
**ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ**
Питание, проживание — БЕСПЛАТНО.
Вахта. Выезд группами до предприятия.
Гарантии. З/п 27 000 – 35 000 руб.
**Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30.** 3-4.

## Прогноз погоды

| | суббота 24 ноября | | | | воскресенье 25 ноября | | | | понедельник 26 ноября | | | | вторник 27 ноября | | | | среда 28 ноября | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +1 | -1 | 0 | -1 | -1 | 0 | +1 | 0 | -1 | -1 | -1 | -2 | -2 | -2 | -1 | -2 | -2 | -6 | -7 |
| Давление мм | 757 | 755 | 755 | 755 | 756 | 757 | 757 | 757 | 755 | 754 | 751 | 748 | 747 | 746 | 746 | 745 | 743 | 745 | 747 |
| Влажность % | 87 | 90 | 83 | 82 | 90 | 98 | 93 | 88 | 84 | 86 | 77 | 86 | 84 | 88 | 81 | 86 | 87 | 84 | 76 |
| Ветер м/сек | 4 | 6 | 5 | 4 | 2 | 1 | 1 | 2 | 4 | 6 | 3 | 4 | 3 | 3 | 3 | 4 | 4 | 5 | 6 |
| | З | Ю-З | З | З | З | З | В | Ю-З | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | З | З | З | З | С | С | С |
| Солнце восход / заход | | 08:48 | 16:31 | | | 08:50 | 16:29 | | | 08:52 | 16:28 | | | 08:54 | 16:27 | | 08:55 | 16:26 | |
| Луна восход / заход | | 14:38 | 04:03 | | | 14:58 | 05:14 | | | 15:21 | 06:23 | | | 15:50 | 07:29 | | 16:25 | 08:31 | |

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 23.11.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4689.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.